**Шухăшăма**

Эх, шухăшăм, шухăшăм,
Мĕншĕн пуçа çавăран?
Мĕншĕн иртнĕ кунсене
Асăнтарса теп тăван?
Ах, шухăшăм, шухăшăм,
Авал йĕни çитмер-ши?
Хальхи çĕнĕ кунсенче
Тэтах йĕртес килет-ши?
Мĕншĕн санăн хут çине
Тухса ӳкес килет-ши,
Лăпкă чунлă çынсене
Макăрттарас килет-ши?
Кай-ха, шухăшăм, манран
Эп çуралнă çĕршыва,
Унта пурччĕ, шухăшăм,
Пит авалхи пер çăва.
Çав çăвара ĕмĕртен
Асаттесем выртаççĕ,
Пурăнăçĕн нушинчен
Хускалмасăр канаççĕ.
Мĕн курман-ши ватăсем
Вăрăм ĕмĕр иртиччен?
Мĕн чăтман-ши мĕскĕнсем
Çăва çине кĕриччен?
Мĕнле йывăр ĕçпеле
Асапланса вилнĕ-ши?
Мĕнле халăх мăшкăлне
Чăтса курса пынă-ши?

[1917]

*Турхан, Э. Шухăшăма [сăвă] / Э. Турхан // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 26.*